

Е 91
6113. чув

ГЕОРГИЙ ЕФИМОВ

# ЯЛТИ ТӖРЛЕНЧӖКСЕМ

Национальная библиотека ЧР
4-006113

ГЕОРГИЙ ЕФИМОВ

С
Е91

# ЯЛТИ ТӐРАНЧӐКСЕМ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1961

С(чув)

М 6113 чув. об.
экз.

ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА

ПРОВЕРЕНО
20 10.

Георгий Андреевич Ефимов

СЕЛЬСКИЕ КАРТИНЫ

Стихи

На чувашском языке

Редактор **Г. Орлов**
Худ. оформл. **Н. Кириллова.**
Техн. редактор **Г. Петров**
Корректор **З. Федотова**

НТ 02070. Сдано в набор 29/VIII-1961 г.
Подп. к печати 6/X-1961 г. Бум. 84×108 1/64.
Печ. л. 2,46. Уч.-изд. л. 2,75. Тираж 1500 экз.
Заказ № 1339. Изд. № 102. Цена 14 коп.

Типография № 1 Мин. культуры Чувашской АССР

г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

## КЛУБ УМЁНЧЕ

Кермен пек клуб ларать ял варринче,
Шап-шурă хурăнсем — йěри-тавра.
Ыр кăмăллăн пăхса, ун умěнче
Тăван çулпуçăн палăкě тăрать.

Тăрать вăл лăпкăн алă çěклесе,
Кěçех сăмах калассăн туйăнать.
Çывăхěнче ÿсеççě чечексем,
Пуçне таяççě, çил вěрсен, ăна.

Пурне те витěр куракан куçпа
Сăнать вăл ман ял-йышăм пурнăçне.
Шап-шурă хурăн симěс çулçăпа
Ўкерне лăпкă сулхăн ун çине.

Ял-йыш тухать-и сарлака хире
Иртсе каять çулпуçě умěнчен.
Сунатпăр сывлăх,
Вăл сунать пире —
Çěнтерÿпе кěме тăван хиртен

* * *

И, улми, сад улми,
Витĕр хĕрлĕ сад улми
Пирĕн колхоз пахчинче,
Улма йывăç çиййĕнче,
Симĕс çулçă айĕнче.

И, улми, сад улми,
Витĕр хĕрлĕ сад улми
Илем кÿрет йывăçне.
Хăйĕн тутлă шăршине
Салатать вăл ял çине.

И, улми, сад улми,
Эпир хамăр — сад улми.
Йăрăс пÿллĕ хĕрĕсен
Йăмăх хĕрлĕ пичĕсем —
Садри писнĕ улмасем.

* * *

Мĕн ачаран иленнĕ улăха
Тухса курсассăн, кăмăл çĕкленет.
Тăри пăраласа, ав, улăхать
Пĕр пĕлĕтсĕр те янкăр тӳпене.

Çĕкленнĕ курăк чĕркуççи таран,
Сиплĕ шăрши уçсах ярать чуна.
Чăп-чăмăркка сап-сар чечек тăçтан
Тыткăнламашкăн тытăнать куçна.

Кăвак-кăвак шăнкрав чечекĕсем
Лараççĕ питĕ лăпкăн, авăнса.
Çил вĕрсенех вĕсем тинкĕлтетсе
Тăрассăн туйăнать, тек янраса.

Супăнь чечекĕ кĕрен пурçăн пек,
Пăхса эс тăранаймăн ун çине.
Тытатăн çеç, ачашшăн, çилĕмпе
Вăл çыпçăнать сан пӳрнӳсем çумне.

Çерçи кĕпçи шур вĕтĕркке çеçкеллĕ,—
Хĕрарăм сунчăкне асилтерет.
Шăрши вара ытла та ун техемлĕ,—
Пĕр хăйне евĕр шăршă çеç кĕрет.

Тăрна пăрçи те кăвакарчăн куçĕ
Лараççĕ сар хĕвел çине пăхса.
Кăкăр тулли сывлатăн.
Сывлăш уçă.
Ăш-чикĕме тăрать хăват парса.

Хавхаланса каян сисмесĕрех,
Çакна хальччен, чăнах, асăрхаманччĕ.
Çĕнĕ вăй-хал вĕрет чун-чĕрере,
Тăван çĕр сывлăшĕ — этем çуначĕ.

## ШĂПЧĂКСЕМ

Ешĕл çулçисем те палăрмаççĕ,
Шап-шурах лараççĕ çĕмĕртсем.
Каçăхса кайсах ĕнтĕ юрлаççĕ
Кĕмĕл пырлă юрăç-шăпчăксем.

Савнипе çаран тăрăх çӳретпĕр,
Тухăç хĕрелет хĕрелнĕçем.
Уйрăлма пит йывăр-çке, сисетпĕр,
«Чимĕр, тăхтăр»,— теççĕ шăпчăксем.

Хĕр сăнне ĕмĕр асра тытмалăх
Тинкеретĕп эпĕ тимлесе.
Аллăмра чăн ĕçре писнĕ алă,
«Çирĕп тытăр»,— теççĕ шăпчăксем.

Чунра вут çунать-и, çунтăр ĕнтĕ!
Канăça çухаттăр-и чĕрем.
Юрату пурнăç тытмашкăн чĕнтĕр,
Ĕмĕрех юрлаччăр шăпчăксем.

Шур пĕркенчĕк пĕркенсе лараççĕ
Лăс туратлă çамрăк çĕмĕртсем.
Юратушăн савăнса юрлаççĕ
Кĕмĕл пырлă ыйră шăпчăксем.

---

* * *

Хĕвел,
Ĕшеннĕскер,
Анса ларать.
Çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ вырăна
Хĕрлĕ хăмач карса вăл хăварать,—
Анăç анне вут хыпнăн туйăнать.

Унтан пырать хуллен тĕксĕмленсе,
Каç сĕмлĕхĕ сĕрет хура сăрне.
Çавах та
Темшĕн июньри каççем
Пуç çинченех витмеççĕ чатăрне. .
Анăç хĕрли юлать кăшт пытанса:
Вара
Вунсаккăрти яш-кĕрĕмсем,
Вăйă пĕтсен,
Час тĕл пулас тесе,
Савни патне чуптарнăн васкаса
Тухăçалла çав хĕрлĕ ăнтăлать,
Шурăмпуçпе кĕçех ыталашать.

Сисместĕн те,
Çап-çут пайăркасем
Сенкер пĕлĕтсене пăраласа
Тухаççĕ те, вара маттурскерсем,
Чăн тӳпере яраççĕ ташласа,
Çапла килет çĕн кун, çĕнĕ илем!

Хĕвелĕ ĕлкĕрейнĕ-ши канса?
Вăл питне çунă,
Курăр,
Тап-таса!

Çуллахи кун çулталăк тăрантатьӀ—
Хĕвел те-мĕн
Çакна асра тытать.

---

## ТĔРЛЕНЧĔКСЕМ

1

Шурă хурăн — шур аппа —
Меллĕн юсанас шутпа
Кунĕпех тăр шыв çинчен
Куç илмерĕ.
Кăтăр-кăтăр кăтрине
Симĕс пурçăнпа темччен
Çивĕтлерĕ.

Хĕвел анчĕ.
Çыр хĕрне
Эпĕ тухрăм пĕчченех.
Шурă хурăн — шур тумпа...
Вăййа тухнă хĕр пекех
Питĕ кăмăллăн манпа
Пăшăлтатрĕ ирчченех...

2

Лапсака
Çăка
Çеçкене ларчĕ.
Ман тăкăрлăка
Пыл шăрши сарчĕ.

Вĕлле хурчĕсем
Унта иленчĕç,
Çĕнĕ кĕвĕсем
Ĕçре ĕнерчĕç.
Ват çăка
Кĕсле пек янăрать.
Кур-ха,
Пыл халех юрлаттарать.

*14.V.61 ç.*

## КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ ХИРТЕ

Хир варринче тăрать вăл пĕчченех,
Тыр-пулăсем ун пĕвĕнчен те çӳлĕ.
Сап-сарă хум чупать пит инçене,
Тен, вăл шырать халь хăйĕн çыранне...
Хир тинĕс пек илемлĕ, килĕшӳллĕ.

Пăшăлтатаççĕ пучахсем хуллен,
Кашни пучахĕ тем каласшăн, тейĕн.
Вĕсен шавне кăшт ăнланас тесен,
Хирте ĕçлес пулать-мĕн кунсерен,—
Ахаллĕн ним те ăнланса илеймĕн.

Ыраш пусси:— Вырма юрать пуль,— тет,—
Тулли вара кăшт тăхтама хушасшăн.
Сип-симĕс вир кĕр çитессе кĕтет,
Пăтă пулса, вăл тутлăн пăсланасшăн.

Пĕр пучаха хуллен илет тытса,
Ывçи çине ăна хурать типтерлĕн.
Эх, пĕрчисем! Шултра та тап-таса.
Кăна ял-йыш, тăван ял-йыш ӳстерне.

Пĕрчĕсене çӳлтен хĕвел сăнать:
«Ман тĕслĕ мар-и ку?» — тесе ыйтасшăн.
Çав вăхăтра пĕлĕт хуплать ăна.
«Çумăр пĕрчи пекех»,— тесе каласшăн.

Тăван ял-йышăм çуркунне çитсен
Хĕвелпелех тăрса хире тухатчĕ.
Çĕре машинăпа типтерлесе,
Ĕç юрринче мухта-мухта юрлатчĕ.

Ак председатель утрĕ малалла,
Хир хумханать, уй-хирĕн çук пуль вĕçĕ.
Вăл шухăшлать: «Вырма кĕç тухмалла...
Ытти çинчен сӳтсе явасчĕ кĕçĕр».

Çар пуçĕ пек сăнать вăл таврана,
Ун куçĕсем хире йăлт ытамлаççĕ.
Тыр-пул хуллен çеç сĕртĕнет ăна,
Пучахĕсем пите лексе лăпкаççĕ.

Пучахĕсем çав! Тутă пучахсем
Хур мăйĕ евĕр авăнса тăраççĕ.
Маттур, маттур ман ялăм-йышăмсем,
Пĕр тытăнсан мĕскер кăна тумаççĕ?!

Вăл савăнать — хастар çĕршыв сынни:
«Эпир вырмашкăн тухăпăр нумаййăн...»
Хăйне те çав ялта савса кашни
Чĕнет-çке халь: «Василь Иванч Чапаев».

Ял-йыш пĕлет, ял-йышĕ ăнланать,
Унра пурах Чапаевăн хастарĕ.

Вăл халăх ĕçĕшĕн чунне парать,
Ĕçчен çынсем те уншăн чунне парĕç.

... Хĕвел тухман-ха. Эрнерен хире
Тăван ял тухрĕ похода çĕкленнĕн.
Комбайн сасси ир шăплăхне сирет,
Электрокомбайн уй-хире иленнĕ.

Мотор кĕрлевĕ, сар хĕрсен юрри
Инçе вĕçет, вĕçет халь çиле майăн.
Хăвăрт тапать Василь Иванч чĕри,
Куççем кулаççĕ ялăмри Чапайăн.

---

## ТРАКТОРИСТ БАЯН ТУЯНАТЬ

Туй ç̆урет-им урамра?
Купăс хытă янăрать.
Çук, туй мар!
Магазинра
Пирĕн паллă тракторист —
Ятлă, сумлă Кĕркури —
Туянать иккен баян,
Çав ярать-мĕн ян та ян.

Епле унăн пӳрнисем
Тӳмисем çине пусма
Халь пыраççĕ ĕлкĕрсе?
Çĕнĕ-çĕнĕ чĕлĕхсем
Çавтер ырă сас пама
Ĕçчен алăра кăна
Пултараççăн туйăнать.

Халăхсем чунтан итлеççĕ,—
Маттурах çав Кĕркури!
Кĕвĕсем инçе вĕçеççĕ,
Инçерех те кайччăр-и!

6113

— Баянне эс туянсассăн,
Ĕç çинчен манса каяссăн
Туйăнать темме мана.
Çÿрĕн эс вара хавассăн
Ĕçкĕрен ĕçке кăна,—
Шăл йĕрсе калать пĕри.
Чăр! пăхать те Кĕркури:
— Мĕншĕн,— тет,— ята яран?
Алла пана куркаран
Эсĕ ху та пăрăнман,
Ушкăнран, ĕçрен юлман.
Ак, хире тухсан куран,
Хăвăр каннă вăхăтра
Тăсса ярăп баяна,
Эс чарайăн-ши чунна?
Урусем
Хăйсем
Кайĕç хускалса.
Хĕрсен
Аркисем
Тăрĕç çаврăнса.
Кайран
Вара
Ĕçлеме тытăнан.
Нормăна
Вăшт кăна
Виçĕ хут тултаран.

Баян кăмăллăн янрать,
Чунсене уçса ярать.
Сутăç савăнса кулать,
Чек çырмашкăн тытăнать.



ЧУВАШСКАЯ
РЕСПУБЛИКАНСКАЯ
БИБЛИОТЕКА
им. Горького

— Укçине ниçта хума
Аптăранă чĕмере,—
Кĕвĕç чун хушать сăмах,
Вĕчĕхсе, пĕр кĕтесрен.
— Укçине тăватпăр хамăр,—
Кĕркури ак йăпăр-япăр
Пат татса хурать ăна.—
Çуртăм пур —
Чăн кантур,
Арăм пур —
Хĕр пек, кур,
Виç ача —
Чупать анчах.

Тек мĕн кирлĕ-ха мана?
Хамăр майлă самана!
Эсĕ пур, укçа тесе,
Йăлтах кайнă вĕтĕнсе.
Электричество çунать,
Радио кĕрлет кăна.
Ку çителĕксĕр!
Культура
Киле кĕтĕр кунран-кун.
Эс çĕршыв уттипе пурăн,
Тинех канĕ вĕри чун.—
Укçине кăларса пачĕ.
Баянне вăл каласах
Ял урамĕпе уттарчĕ.

Йывăççем пăшăлтатса,
Пуç тайса пăхса юлаççĕ.
Çулçисем-мĕн ал çупаççĕ.

Тракторист хавасланать.
Ӑшӑ туйӑм чӗрере.
Алӑкне уҫса ярать,—
Пӳрте музыка кӗрет.

---

## ВОДОПРОВОД

Эп аставап: ирех тăратчĕç
Хĕрарăмсем хĕрӳ ĕçе,
Ĕне сăватчĕç, вут хутатчĕç,
Каятчĕç шыв ăсма кĕçех...

Анчах çăлкуç патне анмарĕç
Паян вĕсем витре çакса.
Çăлкуçĕ тăлăххăн шавларĕ
Валак çинчен шыв юхтарса.

Мĕскершĕн тăлăха вăл юлчĕ?
Мĕн пулчĕ ял çыннисене?
«Халь савнă ял хула пек пулчĕ,—
Тесе мучи хаваслăн кулчĕ
Якатнă май шур сухалне.—

Ман пӳртĕме эс кĕрсе кур-ха,
Ман пӳртĕмре çăлкуçĕ пур халь!
Крана уçса ярать те арăм,
Вара таса та уçă шыв

Шăнкăртатса юхать пĕр ярăм,—
Кун пек ансат ĕç мĕн пур-ши?»

Епле-ха савăнмасăр тӳсĕн?!
Водопровод-çăлкуç пӳртре!
Ман тăван ял татах та ӳсĕ,
Ял илемленĕ кунсерен.

---

## ПĔРРЕМĔШ КВИТАНЦИ

Йĕтем çинчен вуникĕ грузовик
Пĕр харăсах кĕр-кĕрлесе тапранчĕ.
Оркестр пек янрать мотор кĕвви,—
Çапла çĕн тырă хулана ăсанчĕ.

«Телейлĕ çул, çĕн тыррăмăр сана!—
Тесе каларĕ манăн ялăм-йышăм.—
Тăван уй-хир ÿстернĕ ылттăна
Ху пÿлмÿне, çĕршывăмăр, эс йышăн.

Пиртен вăл пултăр чи паха парне,
Паратпăр ĕç ăннишĕн савăнса.
Çĕн стройкăсем ÿстерччĕр хăватне,
Совет çынни тĕнчемĕр уçлăхне
Кашни çулах-и тăтăр çул хывса».

Пырать колонна аслă çулпала,
Пусне тайса юлать хирти тыр-пулă.
Çÿл тÿпере япшар хĕвел кулать,
Вăл пирĕн савнăçа ăнланчĕ пулĕ.

Ак, элеватор тухрĕ куç умне,
Хăнасене вăл тимлĕн кĕтет мар-и?
Унăн сăрпа сăрланă хапхине
Çĕн тырă анлăн, чыслăн уçса ярĕ.

Грузовиксем çитеççĕ кĕрлесе.
Вĕсене хирĕç йышăнма тухаççĕ.
«Çĕн тырăпа малтан килекенсем,
Салам сире!»— тесе халь саламлаççĕ.

Колхозниксем пушатрĕç тыр-пула.
Алра пĕрремĕш, малтанхи квитанци.
Çĕклет вăл пирĕн шухăш-кăмăла.
«Эпир пĕрремĕш!»— тесе ял мухтанчĕ.

Тусан çĕкленчĕ аслă çул çинче,
Тулли лавсем килеççĕ пире хирĕç.
Чи ырă туйăм пирĕн чунсенче:
Хĕрÿллĕ те хастарлă кунсем çитрĕç.

## ХИРТИ КОНЦЕРТ

Таса тӳпе —
Сенкер абажур пек,
Хӗвелӗ —
Пин-пин ватлӑ лампа тейӗн —
Пуҫ тӳпинчех тӑрать-ҫке ҫакӑнса,
Хӗртет татти-сыпписӗр,
Йӑл кулса,
Сулхӑналла кӗмесӗр те тӳсеймӗн.

Мотор та чӑтаймасӑр пӳлӗнет,
Пӑчӑпала илет тек чыхӑнса.
Сисмеҫҫӗ те ҫынсем:
Кухньӑ енне
Час-час пӑхаҫҫӗ ӗнтӗ ҫаврӑнса.

Рельс чанклатать,
Чӗнет апат патне.
(Хӗрнипеле вӑл янрамасть иккен.)
Ҫӑваҫҫӗ те ҫынсем питне-куҫне
Столовӑя утаҫҫӗ ерипен.

Пуса каччи пек ҫӑмӑл ухӑнса
Ҫитет ак почтальон ҫӗн хаҫатпа:
— Час апатланӑр,
Ҫитӗ вашкӑртса
Кунта кӗҫ филармони концертпа.

— Аванччӗ,— теҫҫӗ,—
Каннӑ вӑхӑтра
Юрӑ таврашӗ кӑмӑла уҫать.
Вӑхӑтлӑха тавралӑх шӑпланать,
Саватӑ-сапа сасси кӑна тӑрать.

Автобуспа ҫитеҫҫӗ артистсем,
Сцена пекки майлаҫҫӗ самантрах.
Пуҫтарӑнса лараҫҫӗ ӗҫченсем
Хирти юман айне, сулхӑнарах.

Ак юрӑ-ташӑ хӗрнӗҫем хӗрет,
Баян сасси чуна ҫӗклентерет.
Хӗрнӗ хӗвел тӳссе тек тӑраймарӗ,
Артистсемпе ташша ҫапма пуҫларӗ.
Вӑрман та ячӗ уҫӑн сывласа,
«Пирӗн бригада...» юрӑ пуҫласан.
Кӑмӑл туллин юрлать тӑван ансамбль:
«Аватать куккукӗ, янӑрать уй-хир...»
— Матви мучи, атя, эс те тӑсан пуль,
Ҫакӑ юрра пӗлместпӗр-и эпир?!

Пӗтӗм уй-хир пуҫларӗ янрама,
Хӗвелӗ тӑчӗ дирижерлама.
Ак сасӑ пачӗҫ лӑпкӑ пучахсем,
Оркестр вырӑнне пулчӗҫ вӗсем.

Флейтăпала каларĕ тăр-тăри,
Ĕçчен çынран юлмасть вăл, куртăр-и!

Концерт пĕтет.
Çухалчĕ ывăнни.
Мотор каллех пуçларĕ шавлама.
Çапла çав вăл — ĕçчен совет çынни!
Хĕрсе ĕçлет, хитре пĕлет канма.

Шăм-шак çăп-çăмăл.
Ĕç ăнса пырать.
Халь шăрăх та именнĕ пек чакать.
Вăрман кашлать,
Уй-хир хум кустарать,
Ĕçчĕнсене мухтав юрри юрлать.

---

## АСАМАТ КĔПЕРĔ

Ăш çумăр пĕр кана лӳшкерĕ,
Тавралăх канăçлăн сывлать.
Çич тĕслĕ асамат кĕперĕ
Мăн Атăла кӳлсе хурать.

Çич тĕслĕ!..
Тĕлĕнетĕн эсĕ.
Асамлă вăй, тен, пур унра?
Пăхса тăратăн куç илмесĕр,
Пĕчĕк ача пекех, вăрах.

Вăл пур — çăп-çăмăл та чечен,
Йăлтăртатса, çиçсе тăрать.
Пур ĕçчен халăх умĕнче
Капăрĕпе курнăçланать.

Çич тĕс!
Ăçтан вăл илнĕ-ха
Çавтер илемлĕ сăрсене?
Вăл аннă пулĕ улăха.

Татса чечек çеçкисене
Çыпăçтарман-ши хăй çумне?

Вăл кĕнĕ ĕнтĕ вăрмана,
Сип-симĕс тĕс кирлех ăна.

Хир тăрăх та çÿренĕ ыррăн:
Ун чух шăрки вĕçетчĕ тыррăн,—
Вара ачаш сап-сар тĕсе
Хăйпе вăл кайнă-мĕн илсе.

Çав вăхăтра хĕрсем хирте
Çÿренĕ, теççĕ, юрласа.
Вăл сассăр сĕртĕнсе иртет
Вĕсен питне уçăлтарса.
Питри кĕрен тĕс пулмасан,
Ăна кам пăхтăр савăнса?

Вăл кайнă тинĕс хĕррине,
Илмешкĕн ун кăвак тĕсне.

Çампа-çке çумăр тамалсассăн,
Хĕвел пайăркине курсан,
Вăл карăнса выртать хавассăн
Пĕр çиçкĕнсе, пĕр йăлтăрса.

«Манра çĕрти мĕнпур сăнсем!»
Тесе мухтаннăн туйăнать...

Çусамăр, ăшă çумăрсем,
Çĕн вăй парсамăр тăпрана,
Илем кĕртсемĕр таврана.

* * *

Паян мĕн-ма çавтер хаваслă,
Чун юрă юрлама ыйтать?
Тин лартнă çăка пўрчĕ аслă,
Чăн-чăн кермен пек туйăнать.

Ача çуралнă бригадирĕн!
Тен çавăнпах-и каçăн-ирĕн
Вĕр-çĕнĕ çутă кантăкран
Пуçне тайса пăхать шур хурăн:
«Ўс, тĕреклен,— тет,— сăпкара,
Маттур пул,
Çĕр çулччен эс пурăн».

Хĕвел те ўкрĕ урайне
Ярт тўрĕ çул пек тăсăлса:
«Тăрсассăн ху уру çине
Çулу сан пултăр тап-таса»,—
Тесе пиллерĕ пепкене.

Чĕвĕлтетеççĕ чĕкеçсем,
Вĕçсе çўреççĕ урлă-пирлĕ:

«Час калаҫмашкӑн вӗренсем,
Сана чӗкеҫ чӗлхийӗ кирлӗ,
Эппин ӑна пиртен илсем»,—
Сӗнеҫҫӗ эреветленсе.

Ларать ав шӑнкӑрч шӑхӑрса:
«Пепкем, ман евӗр ӗмӗр савӑн.
Ҫынпа калаҫ шӑкӑлтатса,
Пул ҫирӗп, йывӑр чух ан авӑн!»

Уй-хир,
Вӑрман,
Улӑх-ҫаран
Сараҫҫӗ сиплӗ шӑршине.
Ача кӑкӑр туллин паян
Ӗмейтӗр тутлӑ сывлӑшне.

Курсамӑр, кашниех хаваслӑ,
Бригадире телей сунать.
Ултӑ кӗтеслӗ ҫӗн пӳрт аслӑ,
Унта халь юрӑ янӑрать.
Ӗҫчен ҫынсен юрри ҫунатлӑ,
Кӑйкӑр пекех иккен хӑватлӑ,
Пӳртрен —
Тӗнче тӑрӑх каять.

## ПĔРРЕМĔШ ВЕЛОСИПЕД

Халь, шутласан, тĕлĕнмелле:
Пит кулăшла пек туйăнать.
Пĕр пухуран аппа киле
Йĕрсе ярас пек таврăнать.
— Мĕн пулчĕ?— теççĕ килтисем.
Анне пăхать шикленерех:
— Ятларĕç-и-мĕн пуçлăхсем,
Тем... чиперех-и эртелре?—
Пĕри те лăпкă мар пӳртре.

Аппа ним калама аптрать,
Куçне тутăр вĕçпе шăлать:
— Мĕскер,— тет,— мĕн... мăшкăллаçа...
Юри кулса... параç парне.
Вĕсен парасчĕ, иçмасса,
Кĕпелĕх илнĕ пурçăнне...
Картишĕнчех, ав, тухса курăр,
Анчах кайран манран ан кулăр.

Тухатпăр пурте картишне,
Курас пулать-çке парнене.

— Апай-турух!.. Мĕн япала?
Хĕртен çаплах ма кулмалла!—
Анне те пĕççине çапса,
Пăхса тăрать çăвар карса.
Ку маншăн пулчĕ пысăк кăсăк,
Ăшра шутларăм: «Питĕ пăсăк
Япалах мар ку, тем тесен те».
Анчах сăмах хушма иментĕм.

Тăрать вăл икĕ кустăрмаллă,
Колхоз вăкри пек мăйракаллă.
Хĕвелпеле йăл-йăлтăрать,
Куçа та йăлт шартса ярать.

— Ят пур-и хуть ку япалан?
Мĕн темелле çынсем ыйтсан?—
Ыйтать анне куçран пăхса,
Нимскер тумашкăн аптраса.

— Велосипед, тесе каларĕç,
Юрать, тет, самокат теме.
— Ай, тем те шутласа кăларĕç,
«Çипет» те «кат»... Ак сана, ме!..

Атте, чĕнмесĕр тăнăскер,
Тĕнче курса çӳренĕскер,
Пурне те пĕлекен çын пек
Тăратрĕ шĕвĕр пӳрнине,
Татса houкаларĕ сăмахне:
— Савăнмалла япалипе...
Хула лаши вăл... Хулара
Çынсем унпа кăна çӳреççĕ.

Çитес çĕре те туххăмра
Çил евĕр вĕçтерсе çитеççĕ.

Хĕрарăмсем вара шăпланчĕç.
Тек вакламарĕç. Час саланчĕç.

Кайран вара
Ялăмăра
Самокатсем килме пуçларĕç.
Мотоциклет та хушăран
Унта-кунта курăнкаларĕ.

... Пĕр вăтăр çул патне пулать
Çак мыскара иртсе кайни.
Анне асилсенех кулать:
— Пит кăсăк пулчĕ хĕр парни...
Ударник, тетчĕç ун чухне.
Пит хисеплетчĕç хăйсене!
Халь кăшт урăхларах калаççĕ:
Коммунистла, тесе чыслаççĕ.

Парни пурнать-ха ман аппан:
Хула лаши — ик кустăрма.
Анчах аппа
«Победăпа»
Паян вĕçтерчĕ хир пăхма.

———

З. Г. Ефимов.

## ÇĂКĂР

Кăмакаран кăларнăскер,
Çап-çаврака та сарăскер,
Сĕтел çинче выртать вăл, курăр,
Çĕн тырă çăкăрĕ! Çĕнни!
Унăн ятне халь юрă хурăр,
Ăна мухтатăр-и кашни.

Çĕн çивитти-çке уншăн сараннă
Паян çавра сĕтел çине.
Шăрши пĕтĕм пӳрте, ав, сарăлнă,
Вăл тухнă-мĕн урамсене.

Çынсем иртнĕ чухне пăхаççĕ
Ăшă куçпа çурт еннелле.
Вара çĕкленчĕклĕн утаççĕ
Вĕсем те савнă килнелле.

Выртать çĕн çăкăр хĕвел евĕр,
Уй-хир шăрши кĕрет унран.
Аслатисен кĕр-кĕр кĕрлевĕ
Янрать халь ыррăн хăлхара.

Чашлаттарать сипетлĕ çумăр,
Тымарсене сĕткен парать.
Ĕçчен çынсен йĕпеннĕ тумĕ,
Йĕпентĕр-и, мĕнех вара!

Ак пĕлĕтсем иртсе каяççĕ,
Тӳпе те тасалсах пырать.
Кӳлленчĕксем кулма пуçлаççĕ,
Озонпала тавра тулать.

Çумăрпала пит çунă тыра
Çилпе типтерлĕн шăлăнать.
Нӳр илнĕ çĕр сывлать те ыррăн,
Пĕчĕк ача пек карăнать.

Çĕн тырă çăкăрĕ!
Çĕршыв
Касса хурать-çке чĕллĕн-чĕллĕн.
Хĕвел, уй-хир, вăрман шăрши
Унран кĕнишĕн эс ан тĕлĕн!

Кăшт куштăркана алсемпе
Чĕлле эп кăмăллăн тытатăп.
Ĕçе вĕреннĕ çемьепе
Çавра сĕтел умне ларатăп.

Ĕçленĕ чух тар юхнă пулĕ,
Тен, мăкăртатнă хăш-пĕр чух?..
Халь, тусăм, кăмăл çĕкленӳллĕ,
Ман пек телейлĕ çын та çук!

Кӑмакаран кӑларнӑскер,
Ҫап-ҫавракa та сарӑскер,
Сӗтел ҫинче выртать вӑл, пӑхӑр:
Хамӑр алпа пӗҫернӗ ҫӑкӑр!

* * *

Хăш чух сăнасарах пăхсан
Çавракарах питӳ çине,
Илетĕп эп асăрхаса
Куç айĕсем йĕрленнине.
Эп тимлĕн пăхнине туйсан,
Сасартăк хĕрелсе каян,
Кĕтмен çĕртен темле ачалăх,
Хальччен курман айван ачашлăх
Пекех вăл туйăнать мана.
Тен, ху сисместĕн эс çавна.
Вара шутлатăп шеллесе:
Иртет-шим çамрăклăх, тесе.
Анчах самантлăха кăна
Çав шухăш амантать чуна.
Виçетĕп иртнĕ кун-çула,
Пăхатăп эпĕ каялла:
Пит çăмăлах пулман çав пурнăç,
Ачапчаллах тем те пĕр курнă.
Çамка çинчен шăпăртатса
Юхатчĕ тар тăпра çине.
Кĕпе ларатчĕ çыпçăнса,

Тек хăпмасла, çурăм çумне.
Вăрçи те, пурте пулчĕ çав,—
Ӳпкелешмен пурăнăça.
Çĕршывшăн! — чĕннĕ те ĕçленĕ,
Ырра ĕненнĕрен çĕнтернĕ.
Курас чухне курман ачалăх,
Темле кĕтмен айван ачашлăх
Санра халь пултăрах, юрать.
Вăл чĕрене савăнтарать.
Сикки сиксе вăй выляма
Эпир пĕрре те ватăлман.
Куçу айне йĕрсем выртнишĕн,
Хĕрӳллĕ çамрăклăх иртнишĕн
Ларас-и ĕнтĕ кулянса?
Çук,—
Вĕçтерер çунат сарса!
Пурнăç курман этем кăна
Сăн-пит пирки пăшăрханать.
Пурнăç хуранĕнче пиçсен,
Илемленет çын кунсерен.
Йĕрсем пулсассăн та питре,
Эс, ан кулян, çавах хитре.

---

## НАÇТУК ИНКЕПЕ
## ХВЕТЮК ТЕТЕ ÇИНЧЕН

*Тем те пулать пурнăçра,*
*Пулмасть тесе ан калăр.*
*(Шÿтлĕ юрăсенчен.)*

Кÿршĕрех вĕсем пурнаççĕ,
Кирлĕ мар кайма инçе.
Çурчĕсем вĕсен лараççĕ,
Пĕлĕрсем, кил урлă çеç.

Пурнăçĕ тăн-тăн Наçтукăн,
Кил-çуртне типтер тытать.
«Кайăк сĕчĕ çеç халь çук ун»,
Тесе халăх калаçать.

Хĕр чухне иккен вăл пулнă
Чи хитри çак таврара.
Çичĕ ял каччи, тет, çуннă
Çак Наçтукшăн шутсăрах.

Хĕр чĕри-мĕн пĕрине
Хытă савнă курăнать.

Вăрçă умĕн, çуркунне,
Вăл вара качча тухать.

Юратсассăн чĕререн —
Пурнăç лайăх, пыл та çу.
Сан пекки çак тĕнчере
Телейли те урăх çук.

Савăнса пурнас чухне
Упăшкипеле пĕрле,
Пĕр хĕвеллĕ ирхине
Вăрçă шавĕ кĕр-кĕрлет.

Çĕршыва хӳтĕлеме
Упăшки тухса каять.
Арăмĕ пулать кĕтме,
Куççульне шăлса юлать.

Паттăрсен вилĕмĕпе
Упăшки вилни çинчен
Шурă хут алла илсен,
Настук йĕрчĕ эрнипе.

Кайран халăх хушшинче
Вăл лăпланчĕ ерипен.

...Уйăхсем, çулсем иртеççĕ,
Сурансем те тӳрленеççĕ.
Тумланма пуçлать Настук,
Тек çӳрет капăрланса.
Çамрăклăх иртмен-ха, çук,
Куçĕ те тăрать çунса.

Сăн-питрен те вăл япшар,
Пĕвĕ-сийĕ те маттур.
Хĕрсенчен те кая мар,
Вĕсенчен ирттерĕ мур.

Юлашки самантсенче
Ĕç патне тухмасть вара.
Вăл çӳрет пасарсенче
Е ларать-çке хăнара.

— Эп тултарнă минимум,—
Тет ытарлăн йăл кулса.
Шухăш ун çинче-и ун?..
Ним те çук уншăн пулсан.

Арсăр арăм вăл йĕвенсĕр,
Мĕнех калăн инкене?..
Чим, тăхтамăр-ши халь эсĕр,
Эп куçам Хветюк çине.

Çав Хисеп хăми çинчен
Сăнĕ ун анса курман.
Хăй çавах çак таранччен
Тăр пĕччен-çке, авланман.

Таврăнсассăн вăрçăран
Тирпейлерĕ çурт-йĕрне.
Ĕçе кӳлĕнчĕ кайран,
Килĕнче пулать сайра,—
Маннă, тейĕн кил тĕлне.

«Авланмашкăн вăхăт мар-и»,
Текелетчĕç ялтисем.

«Эп юратрăм, вăл пăхмарĕ»,
Ирттеретчĕ шӳтлесе.

Анчах мĕн тăвăн чуна,
Чун, паллах ĕнтĕ, çунать.
Выляса тăран юна
Кам чармашкăн пултарать?

Наçтука вăл куç хывать,
Анчах калама хăрать:
«Хам кăшт çамрăкрах пулсассăн,
Унпала каç-каç пĕрле
Çăлтăр шутласа хавассăн
Эп ним мар çӳремелле».

Хăш-пĕр чух Наçтук килне
Ăна чĕннĕ нимене.
Вăл карта та тыткалană,
Вуттине те çурса панă.

Каччă ӳкнĕ аптраса,
Янă купăс туянса.
Каçсерен ăна тытса
Ларнă тек шăрантарса.

Наçтук сиснĕ те çакна,
Шӳтлесе-ши те чăнах:
«Пĕччен калама кичем,
Ман валли тăмра илсем»,—
Тенĕ имĕш каччăна.

Хветюк тепĕр ирхинех
Кайса илнĕ, тет, тăмра.

Кĕтнĕ, кĕтнĕ пикине,
Настукки пыман вара.

Çав каçран вăл купăсне
Каламашкăн пăрахать.
Савса илнĕ тăмрине
Çунтарса часах ярать.

«Мĕншĕн култарас хамран,—
Тет вăл хытă кӳренсе,—
Халиччен эп ят яман,
Ямăп халь Настук тесе...»

Анчах мĕн тăвăн чуна?
Чун Настукшăнах çунать!
Вăхăчĕ чылай иртсен,
Вăл Настук патне хуллен
Калаçма кĕрсе ларать.
Тен, халь чунĕ çаврăнать?..

Калаçаççĕ, калаçаççĕ,
Ак ăçта пырса тухаççĕ.
— Итлесем, Хветюк, мана,
Тăвасах тесен туйна
Эс ялти клубра ирттер,
Туйĕ пултăр шеп, чипер.
Унтан эс ман çуртăма
Куçса килĕн пурăнма...

Шутлама пуçлать Хветюк:
«Çук, ята эп ярас çук
Сан патна куçса килсе.
Мĕн пулать киле кĕрсен?..

Манӑн хамӑн та ҫурт пур,
Ҫуртӑм аслӑ, чӑн кантур...»

Вӑл вара ҫапла калать:
— Клубра туй тума пулать.
Анчах эсӗ колхозра
Пилӗке аплах авман.
Тен, кайсассӑн пасара
Пулать лайӑх туй тума...

Хӗрелмест Настук инке,
Тустарать вӑл йӗкӗте:
— Сан уру кунта текех
Ярса ан пустӑр пӗртте!..
Хветюк шӑппӑн шӑвӑнать,
Тарӑн шухӑша путать.

Ҫавӑрмашкӑн Настука
Питӗ хӗн иккен трукках.
Тупмалла ҫавах мелне...

. . . . . . . . . . . . . . . . .

Хӗвел кайнӑ каҫ енне.
Пасартан килет Настук,
Ҫитрӗ ак пӗве хӗрне.
Яшт! сиксе тӑрать Хветюк:
— Кӗтрӗм, кӗтрӗм эп сана,
Юлтӑн пит каҫалана.
Ыртӑн пуль, кӳр ҫыххуна
Ҫитерсе парам килне,
Асра ан тыт иртнине.

Ӑшӗнче Наҫтук савнать,
Ҫыххине паратЬ ӑна.
Ак кӗпер ҫине кӗреҫҫӗ,
Хӑйсем кӑмӑллӑн пуплеҫҫӗ.
Анчах мӗн ку? Ҫыхӑна
Хветюк печӗ пӗвене...
Наҫтук хытӑ ҫиленет:
— Эсӗ мӗн, шуйттан ҫури,
Кулма тухрӑн-им юри?!
— Ҫук, шуйттан ҫури шывра,—
Тет ӑна Хветюк вара.—
Ҫавӑ ҫыхӑ сан чунна
Сутӑн илнӗ курӑнать.
Тепре ҫеҫ кай пасара,
«Капкӑна» ҫырса ярап.
Кӑн пӑхать Наҫтук инке,
Сӑнӗ шурнӑ кӗл пекех:
— «Капкӑна»?.. Мӗскер тума?
Ан ярсамччӗ ятӑма.
Ял ятлатӑр, ҫитӗ-ҫке,
Капла пурте пӗлӗҫ-ҫке,
Кирек ҫта кайсан, кайран,
Пӳрнепе ман ҫинелле
Кӑтартсан тӗлле-тӗлле,
Мӗн тӑвас пулать?.. Ӑнлан!..

* * *

Малалла мӗн пулнӑ тетӗр?
Кӑштах тӑхтӑр-ха. Пӗлетӗр.
Ҫапла, иртнӗ кӗркунне
Пухӑнаҫҫӗ ял клубне

Пирĕн паттăр ĕçченсем.
Туй ирттернĕ, тет, вĕсем.

Туйĕнче эп хам пулман,
Тăпăр-тăпăр ташламан,
Çĕнтернех-мĕн юрату,
Мăшăрланнă çав Хветюк.
Ялăм-йышăмсем çыраççĕ:
«Хветюкпа Наçтук сăнне
Юнашар ялан лартаççĕ
Халь Хисеп хăми çине.
Наçтук панă-мĕн çуртне
Тăван ялăн фермине...»
Тем те пулĕ тепĕр чух,
Пулмĕ, теме сăлтав çук.

## МУЛКАЧПА ÇИЛХĂВАН

Кĕççе пек курăклă çырма пуçне
Мулкач çăвăрласан çурисене:
— Тĕл пулăпăр-ха,— тенĕ,— пасарта,—
Хăй тапса сикнĕ таçталла вăштах.
Вĕсем çинчен вăл урăх асилмен:
Те пур, те çук —
Пĕлмен.

Пĕр Çилхăван хитре хĕре куçланă,
Ытти çынсем пекех туйпа авланнă.
Ача çуралнă ун çулталăкран.
Вăл арăмне те, ачине те маннă,
Теприн патне васканă Çилхăван.
Кунсем-çулсем пĕр систермесĕр иртнĕ,
Хăй йĕркипе ун ватлăхĕ те çитнĕ,
Шырать вăл алимент хăй ачинчен...

Ăна, ăнманскере, мулкач çинчен
Юмах ярса парасчĕ судьясен.

---

## АННЕ

Кашни çулах вăл хулана
Килет курмашкăн,
Хăнана.
Икерчĕ,
Кукăльпе шăрттан
Вăл кăларать те хутаçран:
— Ял çимĕçне, кучченеçне,
Астивсе пăхăр,— тет, сĕнет.—
Апачĕ ĕнтĕ хамăрла:
Пурри — пĕрле, çук — çурмалла.
Килте пĕр пĕчĕк сăра турăм,
Сире валли те ăсса тухрăм.
Кăшт сыпса пăхăр.
Хăмлине
Ярса аçу ӳстернине.
Атя-ха, тыт-ха, кил-ха, кин,
Тĕл пулнă пек пултăр эппин...

Унтан ялти çинчен пире
Йĕркипелех вăл пĕлтерет.

Хаҫат ҫынни кунта ларсассăн,
Пĕр очерк ҫырĕччĕ хавассăн.
Пĕлет кашни вак-тĕвеке,
Мĕнле калас, завхоз пекех.
Вара хушса хурать: — Кунта
Килтĕм канма тесех ялтан.
Пĕр-ик эрне таплаттарса
Ҫӳрем-ха эп хула курса.

Вăл ҫĕр каҫать.
Тепĕр кунне
Утать мăн Атăл хĕррине.
Курса ҫӳрет яра кунах,
Хула ӳснишĕн савăнать.
Виҫҫĕмĕш кун ҫине кайсан,
Вăл хумханма пуҫлать чунтан:
Чăн, ҫăмарта тăвас чăх пек,
Кускаласа ҫӳрет-ҫке тек.
Кĕпи-тутрисене вара
Пĕр ҫĕрелле пухса хурать.
— Сирĕн кунта вутне те хутнă,
Ҫăкăр пĕҫернĕ, шывне тултнă.
Алла ниҫта та чикме ҫук,
Ытла кичем-ҫке кун пек чух,—
Хăйне хăй ӳпкеленĕ пек
Пуплет вăл савнă кинĕпе.—
Ҫитет пуль ĕнтĕ... Хăналантăм.
Кил-тĕрĕше те йăлтах мантăм...
Мĕн чухлĕ ĕҫ уйра-хирте...
Аҫу та пĕччене килте...
Каям... Ан ятлăр... Чипер пурнăр.
Чун пусармалăх килсе курнă...

Ялан çапла.
Ик-виç кунран
Тухса каять вăл хуларан.

Мĕн ачаран ĕçпе ӳссен
Ахаль лармашкăн хĕн иккен.

## ЫВĂЛĔ

Канма тесе вăл яла килнĕччĕ,
Ятарласах-çке отпуск илнĕччĕ.
Анчах канмашкăн майĕ пур-и?
Кунта кашни ыйтать-мĕн юрă.

Клуба пымашкăн тилмĕреççĕ:
— Çĕн юрă вĕрентсемччĕ,— теççĕ.
Мĕнле-ха юлăн пăрăнса
Ял çамрăкĕ чунтан ыйтсан?
Е хăй вăл яш пулса курман-и,
Вăй выляман-и те кулман-и?

...Канас кунсем пит хăвăрт иртрĕç,
Сывпуллашма та вăхăт çитрĕ.
Ик кун юлсассăн, ун патне
Ял председателĕ килет:
— Радиопа юрланине
Сана час-час илтетпĕр,— тет.—
Хамăр ялсем эс, ял умне
Тухса шăрат юррусене.
Чăрмавĕ пысăк... Мĕн тăвар?
Çавах та кăмăла тултар.

— Ыйтать пулсассăн тăван халăх,
Сăмахăм манăн питĕ паллă.

Кĕскен кăна: «Концерт пулать,» —
Тесе пурне те хыпарла.

Каç...
Клуб тулли çынсем лараççĕ.
Улма ўкме те вырăн çук.
Тăван юррăмăрсем янраççĕ,
Чуна сĕрсе яраççĕ çу.

— Маттур ача ўстертĕн эсĕ,—
Ак, кўршĕ юрăç амăшне
Сăмах хушать кĕç тўсеймесĕр,
Пытараймасăр савнăçне.

— Çĕршывăмăр ўстерчĕ мар-и?
Тăлăхскере вăл пăрахмарĕ,—
Амăш хуллен кăна калать,
Хăй сцена çинеллех пăхать.
«Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми ати-ани...»—
Кăшт хурлăн юрă янăрать.
«Пулчех пуль çав хуйхи-суйхи,
Юлмарĕ пулĕ курманни,—
Ашра-çке амăш шухăшлать.—
Вăкăрсемпе ака туса,
Пĕчĕккĕллех сухаласа
Хул-çурăмна сахал-и ватнă?
Хĕвелпеле пĕрле тăрса
Аш ыйăхна мĕн чухлĕ татнă?
Çавах: «Анне, суха тытма
Вĕрентĕм-ха, хурланар мар»,—
Тесе мана эс йăпататтăн,

Ырсассăн та йăл-йăл кулаттăн.
Халь ав кĕрлеççĕ тракторсем,
Ăнса пулаççĕ тыр-пулсем»...
«Улах хĕрĕ юрла-юрла
Кĕнчелине хуллен арлать.
Хăй юррипе, хăй сассипе
Тусне чĕнет вăл шăпчăк пек»,—
Пуçлать çĕн юрă шăранма,
Çамрăклăха асăнтарма..

«Улах юрри,— шутларĕ амăшĕ,—
Кăна хĕр чух мĕн чул юрланă-ши?
Шухăшласан, тухать куççулĕ...
Халь ывăлăм асилчĕ пулĕ:
Хăйне пĕрре, пĕчĕк чухне,
Улах пÿртне кÿртменнине.
Хăй çав-çавах, сивве пăхмасăр,
Пытаннă та кантăк айне,
Хĕрсем шалта юрланине
Итлет пĕрре те хускалмасăр.
Пит шăнса кÿтнĕччĕ. Аран
Эп илсе кĕтĕм урамран.
Юрланине çавтер тăнлатчĕ,
Пĕччен юлсан вара,— юрлатчĕ»...

Вăхăт ытла та час шăвать.
Кĕçех ак çурçĕр çывхарать.
Çаплах-ха юрă шăранать.
Янрарĕ «Чĕнтĕрлĕ кĕпер»,
Çырма хĕрне анчĕç чупса.
Ыр «Вĕлле хурчĕ», ылттăнскер,
Кăшт тăчĕ те нăр-нăрласа,

Сĕм «Вăрман урлă» васкаса,
Пĕр çăка йывăç шыраса
Вĕçтерчĕ çав тери инçе,
Асăма юлчĕ кĕвви çеç.

Çук, тапранасшăн мар-ха халăх,
Хĕрсе кайсах çупать вăл алă.

Анчах та юрăç ывăнать,
Пырĕ çине-çке кăтартать.
Халăх тек ыйтнине кура,
Вăл аллине çĕклет: — Юрать,
Эппин пурте пĕрле юрлар.
— Пĕрле юрлар. Атя, пуçла! —
Пĕри чĕнсе калать зала.

«Мухтавлă парти, тав тăватпăр
Эпир сана чун-чĕререн.
Эс хурçăран та çирĕп, паттăр
Эс вăйлă халь нихçанхинчен.
Пуян тăван çĕршыв уй-хирĕ...»
Ял-йыш пĕр кăмăллăн юрлать.
Пуласлăхĕ вĕсен пит çирĕп,
Ăна кашни курса тăрать.

Ак юрă пĕтрĕ. Председатель
Мухтавлă юрăç амăшне
Сцена çине илсе тухать те
Хыт чăмăртать аллисене:
— Çын манмасассăн амăшне,
Манмасть нихçан та ял-йышне.
Тăван ялтан чап çĕкленет,
Вара каять вăл инçене.

Пиртен сана — чăн юрату...
Халь аннӳне савса чуп ту,—
Хăй, сăмахне пĕтернĕ май,
Пуçлать хĕрӳллĕн ал çупма.
Алă çупни кĕрлет, кĕрлет...
Юрăç хăй амăшне илет
Сăпайлăн, меллĕн ытама.
Анчах та амăш именет
Халăх çинче чуппа тума.

Куççуль тумлать ун куçĕнчен,
Пуçне пĕкет вăл ерипен.
Сисмесĕр хĕрелсе каять:
— Ачам, тавах...— тет, ыталать.

Пĕлесчĕ ман.
Телей тени
Мĕн-ма вăтанчăк-ши çапла?
Савăннă чух куççуль юхни
Кама пит кирлĕ пулмалла?
Анчах пĕлетĕп эп çакна
(Ĕненмесессĕн ху сăна):
Телейлĕ чух çут куççульне
Çын пытармасть-мĕн ĕмĕрне.
Ăна шăлма та васкамасть,
Савăнăçа вăл хупламасть.
Сценă çинче вĕсем тăраççĕ,
Ял-йыш умне пуçне таяççĕ...

Канма тесе яла вăл килнĕччĕ,
Ятарласах-çке отпуск илнĕччĕ.

Канма юрать-и-ха юрра
Кунсем хӗрӳллӗ вӑхӑтра?
Ҫунат парса ҫут ӗмӗте
Чӗнет, чӗнет вӑл инҫете.

## ХАЛĂХ КĔВВИ

Вăрманта çӳрерĕм эп, кас турăм,
Лутра шĕшкĕ мăйăрне эп пухрăм.
Катса пăхрăм, тĕшшине тутантăм,
Тути çу пек, ай, тинех ăнлантăм.
Ахаль мар калаççĕ халăхра:
«Лутра шĕшкĕн мăйăрĕ пит тутлă,
Ун тĕшши нихçан та пулмĕ хуртлă,
Татма çеç ан манăр вăхăтра».

* * *

Ирсеренех пуçларĕ тăм ӳкме,
Вăрман та кĕренленчĕ ерипен.
Пуçларĕ çурçĕр çилĕ ĕрĕхме,
Ăна тытса чараймăн чĕлпĕртен.

Çулçăсене шеллевсĕр вăл ласкать,
Тăкăнмасан, силлет йывăççене.
Мĕскер тума вăл хытă тарăхать?
Мĕн килĕшмест ун чăрсăр кăмăлне?

Турат çине
Пăхатăп тимлесе:
Акă саралнă çулçă туни айĕн
Пуçне кăларнă çĕнĕ папкасем
Пăхса лараççĕ лăпкăн та сăпайлăн.

Кунта иккен çĕн пурнăç пуçланать!
Вăл киввине хуллен сирмешкĕн тивĕç.
Хĕлле юнать.
Çĕнни пăхмасть ăна,—
Хăртаймĕ, пĕтерраймĕ шатăр сивĕ.

Каллех ак çутă çуркунне çывхарĕ,
Папка ем-ешĕл çулçине кăларĕ.

---

# АТĂ

Çич пушăт çăпати туса
Çĕн тăлапа ура сырсан,
Кӳрше уттартăм эп тухса.
Ан тив, ăмсанччăр тантăшсем,
Ман пек пултарччăр-ха вĕсем!

Кĕретĕп тантăшăм патне,
Иртетĕп эп тĕпел енне.
Хам вăрттăн-карттăн, чалăшса
Ура çине илеп пăхса.
Мучи çакна асăрхаса
Хурать чеен сăмах хушса:
— Çĕн çăпата?.. Ху хуçрăн-и?
Хăвах çапла тăвайрăн-и?
— Хамах-çке!..— тавăрса калатăп,
Чĕрем кăлт-кăлт тапать, туятăп.
— Çывăхарах килсем, ачам,
Чипер-и? Çирĕп-и? Курам...
И, хитре хуçнă, пултаран!
Çăпати пичĕ пит аван!
Матку чечек пек пулĕ сан...
Маттур!.. Лаша-мĕн пуласси
Тӳрех çав паллă тихаран,—

Кăштах чĕтренчĕ ун сасси,
Мана лăпкарĕ пуçăмран.

Пит кайрĕ пĕçерсе,
Хĕрелтĕм,
Мухтанăран чунпа çĕклентĕм.
Çав çулхинех,
Эп астăватăп,
Аттеçĕм илсе пачĕ атă.
Кунчи кăпăк пекех çемçе,
Хĕвел çинче ялтрать, çиçет.
Чăн куçкĕски пек туйăнать,
Пăхсассăн сăн та курăнать.
Каллех кӳрше тухса утатăп,—
Атта юлташсене кăтартăп.

Пусатăп çеç шаклаттарса,
Ман атă юрă юрласа
Хăй еннелле-çке пăхтарать,
Тантăшсене ăмсантарать,
Кĕвĕçтерет, тарăхтарать.

Мучи атта асăрхасан,
Хурать хуллен сăмах хушса:
— Атта аçу туянчĕ пулĕ?
Аçу маттур, маттур çав сан...
Кăна илтсен, кĕçех куççулĕ
Юхса анмарĕ куçăмран.

Йăлт тĕксĕмленчĕ çутă атă,
Хам аптраса пăхса тăратăп.
Атта мĕн-ма вăл мухтамарĕ,
Ман аттене кăна ырларĕ.

Ыраттарсан та чӗрене,
Мучин ытарлӑ сӑмахне,
Чӑнах та,
Темиҫе ҫултан
Ӑнланса илтӗм эп чунтан:
Хӑй аллипе туни кӑна
Мухтав кӳрет иккен ҫынна.

## ÇĔНĔ ÇУЛ КУРКИ

Çĕн Çул кaç мĕн пулнине,
Хам куçпа хам курнине,
Çырса хутăм хут çине —
Вулаканăмсен ятнех.

Хĕл Мучи куркапала,
Авалхи йăлапала,
Килĕрен киле çÿрет,
Çĕнĕ çул курки сĕнет.

Ак, пĕр алăк патĕнче
Мучи тăчĕ темĕнччен.
Шăнкравларĕ те шаккарĕ,
Сăран алăк уçăлмарĕ.

— Ыран килĕр,— хулăн сасă
Илтĕнчĕ шалтан.
— Чипер юл апла пулсассăн!..
Çак Çĕнĕ çулта
Курас марччĕ, тупата,
Тек бюрократа.

Леш çын уçрĕ алăка,—
Мучи кайнă аякка.
Бюрократа — мĕн терĕн!
Çĕнĕ Çул курки лекмерĕ,—
Пырне йĕпетеймерĕ!

Кăмака çинче пĕри
Выртнă канлĕн çав тери.
Ăшăпа вăл реххетленнĕ,
Çаврăнмашкăн та ӳркеннĕ.
Хĕвел пур-и тĕнчере —
Шутламан çак чĕмере.
Ик айкки те тăвайкки,
Ним те мар çурт тайлăкки.
Ак шакканă алăкран,
Вăл пур выртнă, тапранман.
Шак-шак-шак!— çине-çинех,
Тапранать вара тинех.
— Кам мур пусĕ кансĕрлет! —
Сăмахне хăй ĕнĕрлет.
Алăкне уçса ярать,
Умра Хĕл Мучи тăрать.
Çын пăхать те йăл кулать,
Алри куркана курать.
Тăсăлать кахал алли:
— Тур парать, тет, ман валли...
Анчах пустуй хăрăнать,
Çĕн Çул курки пăрăнать.

Ашшĕ-амăш хӳттипе,
Çĕрулми калчийĕ пек,
Шуранка та тăрнаккай
Ӳснĕ çилхăван-кăркка.

Вăл пĕлмен
Ĕç тĕлне.
Илнĕ амăшĕнчен
Яланах хăй пайне.
Тутлине —
Хĕрсене,
Йӳççине —
Хырăмне
Йăвантарнă.
Каçхине — ташăра,
Кăнтăрла — ыйхăра
Хуп турттарнă.

Ал-ля-ля, тра-ля-ля! —
Çаврăнать пӳлĕмре,—
Халь ăçта каймалла! —
Пуплешет селĕпрех.
Шăнкăрав янăрать,
Каччă шăпăрт пулать.
«Оля, Валя, Танюк
Е йĕтетмĕш Верук»,—
Шухăшлать ăшĕнче...

Тамаша! Ак тĕнче!
Шур сухал алăкра:
— Харампыр! Çĕн çулта
Юлмĕ саншăн юлташ!
Йĕкĕт чĕнчĕ: «Анне!..»
Анчах ун аллине
Çут курка çакланмарĕ,—
Сан телей çапла мар-и!

Ак кунта тепри ларать,
Шут шăрçине шутарать.
Шак! — шаккаççĕ алăкран —
Хĕл Мучи тăрать умра.
Вăл тĕпчет,
Тĕрĕслет:
— Сăмах панă!
— Кăшт мухтаннă...
— План?!.
Тулман...

Çавах алтăра куçлать,
Аллине тăсма пуçлать
Çак ханттар.
— Эп санпа тус-пĕлĕш мар,—
Мучи алăка хупать,
Шăппăн çухалать.

Тулта шăхăрчĕ сив çил.
Сăмах пачĕ Хĕл Мучи:
— Йăх-яха ан куртăр куçăм,
Таса пултăр çĕнĕ шуçăм!

Пĕр Культура Керменне
Лекрĕм эп çав каçхине.
Хĕл Мучи сăмах kаларĕ,
Ĕçчен çынсене мухтарĕ.
Çичĕ çуллăх парнине
Халалларĕ вĕсене.

Чăн-чăн ырлăх çакă мар-и!
Кермен савнăçлăн кĕрлет.
Çĕнĕ Çул курки янрарĕ
Кремль сехечĕпе пĕрле.

* * *

Хӗл ларчӗ.
Сивӗ.
Чӗпӗтет.
Мулаххая пусса лартатăп.
Чӗнет,
Чӗнет тăван инçет,
Ялтан эп хирелле тухатăп.

Куçа çиет тин çунă юр,
Хур мамăкӗ пекех вăл çăмăл.
Унра темле асамлăх пур:
Самант! —
Çунат хушать-çке кăмăл.

Саккăр пекех пичетленсе
Вӗр-çӗн кăçат йӗрри хыçа
Юлать хуллен йӗркеленсе,—
Çӗн юр çинче-çке çул уçан!

Сывлатăп эп кăкăр тулли,
Чӗре пӗр тикӗссӗн тапать.

Вăтанчăкрах хĕвел кулли
Сăпай хĕре асăнтарать.

Ахах-мерчен çакнă пекех
Хир кăкăрĕ ялтрать халь, курăр,
Шап-шурă-çке талккăшĕпех,
Çĕн çыннăн вырнĕ пек чăлт шурă.

Чим!..
Мĕн янрать таса уйра?
Вăл илĕртет те йыхăрать.
Эх, шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав!..
Чуна йăлт çĕклесе ярать.

Тен, туй килет çĕмĕрттерсе?
Хĕрĕх лавпа килет пуль харăс!
Самăр утсем хĕм сирпĕтсе,
Çил кăларса пыраççĕ мар-и?!

Тен, ыткăнать пар хăрах ут?
Ларать пуль Пушкин кӳмере?
Куççем çиçеççĕ, куççем — вут,
Хайлать вăл сăвă ирĕкре.

Тавралăх юрăпа тулать,
Чуна çатăрласах тытать.

Ăнлантăм:
Çĕр çĕмĕрттерсе,
Тавралăха илем кĕртсе,
Çĕн юр çине çĕн çул хывса,
Юратупа телей сунса,

Нихҫан та ватăла пĕлмен
Поэзи-тус ҫӳрет иккен.

Куҫа ҫиет тин ҫунă юр,
Хур мамăкĕ пекех вăл ҫăмăл.
Унра, чăнах, асамлăх пур:
Самант! —
Ҫунат хушать те кăмăл.

## ЮРАТУПА ТĔЛ ПУЛНИ

Эп ун чухне вунçиччĕреччĕ,
Лекместчĕ ман ура çĕре.
Тĕнче касса вĕççе çӳретчĕç
Ĕмĕтĕмсем çӳл тӳпере.

Вылятчĕ хĕрӳ юн ăшра,
Вăрттăн ачашлăх вăрататчĕ.
Сăваплă вырăнта, чунра,
Темскер çитмен пек туйăнатчĕ.

Мĕскер çитмест-ши? Пĕл ăна!
Таçта-çке ăнтăлать чĕреçĕм...
Хĕрсем каяççĕ çырлана,
Мана пĕрле пыма чĕнеççĕ.

Вĕсем шӳтлеççĕ.
Йăл кулса,
Куçран пăхаççĕ пит ытарлăн.
Самант!
Куçпа куç тĕл пулсан,
Питна вут-çулăм, ай, хыптарăн.

Кайран,
Çырла татса килсен,
Хĕрсемсĕр,
Тăр-пĕччен юлсассăн,
Шăнкрав пек сасăсем темччен
Янраççĕ хăлхара хавассăн.

Кашнин сассийĕ хăйне май,
Кашнин сасси хăй евĕр лайăх.
Пуçларĕç тейĕн юрлама
Пĕр саншăнах çĕр тĕрлĕ кайăк.

Анчах та çавă ушкăнра
Пĕрин сасси ыттисенчен
Ытла та уйрăм янăрать:
Сасси калама çук чечен,
Сисместĕн ху та,— тыткăнлать,
Пĕр ачашлать те çупăрлать.

Çав самантран-и,
Тен, малтан,
Калаймăп халĕ пăт татса,
Чĕреçĕм варринче, шалта,
Чи тап-таса ыр вырăнта
Хăйне валли йăва туса
Хурать юратăвăм.
Вара
Яш ĕмĕре çунат парать.

Çаран варне-и эп тухатăп,
Ăна хампа пĕрле туятăп:
Кĕрен чечек ман умăмра
Çилпе вылять те пĕр кана,

Сасартăк хĕр пулса тăрать,—
Вут-çулăм хыптарать чуна.
Кĕпи тĕлĕнмелле кĕрен,
Сар чечек пек сап-сарă çӳçĕ.
Куратăп ĕмĕтри хĕре,—
Ăна савмасăр мĕнле тӳсĕн?!

Ыраш шăрки хирте вĕçет-и,
Ларать-и вăл тумтир çине,—
Каллех ман патăма килетĕн,
Çĕклентеретĕн чĕрене.

Шĕшкĕлĕхе,
Çуртри пĕтсен,
Мăйăр татмашкăн эп кĕретĕп.
Туталнă мăйăра пĕччен
Шĕкĕлчесе-катса çӳретĕп.
Кĕтмен çĕртен,
Курланкăран,
Пĕр мăйăрĕ çĕре ӳкет.
Çавă сап-сарă мăйăртан
Самантранах сар хĕр ӳсет.
Мана курать те йăл кулать,
Асамçă евĕр çухалать.

Ĕмĕтĕм хыççăн çӳресе
Тухать ман чунăм тинĕсе.

Ишетчĕ киммĕм чиперех,—
Хускалчĕ тăвăл тинĕсре.
Вăл кайрĕ ахăрса, урса,
Кимме пыр çирĕпрех тытса!
Çирĕп тытсан та,
Турпас пек

Вылять çеç тинĕс кимĕпе.
Ак, çӳлĕ хум кимме çĕклет,
Чуллă çыран çумне перет.
Чăл-пар çеç кимĕ саланать,
Аран тухатăп çырана.
Кимми,
Чăнах та çав,
Черченччĕ,
Хуçи
Ишмешкĕн вĕренменччĕ.

Кайран ак пурнăç лаççине
Кĕрет те юрату илсе:
«Пăхсам, тет ĕмĕт, ху çине,
Кайман-и эсĕ нишленсе?»
Ман чĕрене вăл тимĕрçе
Тăпăлтарса илсе парать.
Хыт вĕртерет те вĕркĕçе —
Вучах хĕрӳн çунма пуçлать:
Хурать вăл шĕл-кăвар çине
Пĕр шеллемесĕр чĕрене,
Унтан, сунтал çине хурса,
Илет пĕр ăстрăм туптаса.
Сивĕ шывра вăл шăварать,
Вара хăй вырăнне лартать.
Çампа чĕре вутра çунмасть,
Хĕл сиввинче те пăрланмасть.

Юратăва пăхатăп халĕ,
Пăхатăп шиксĕр куçĕнчен.
Савни-юратăвăм мĕн калĕ?

Мана мĕн калĕ хальхинче?

Сар мăйăр евĕр сарăскерĕм,
Кĕрен чечек пек кĕренскерĕм
Мана тытать те ыталать,
Вут кăларас пек чуптăвать,
Йăвашшăн, кăмăллăн калать:
«Тăри юрри, хирсен кĕвви,
Чие çырлин чечек тĕвви,
Йăл кулă, суккăр кӳлешӳ,
Чунри хăватлă кĕрешӳ,
Сенкер тӳпе пек таса пурнăç,—
Йăлтах вăл пур юратура.
Утас çулу ан пултăр пăрнăç,
Пуçна ан ус йывăрлăхра.
Сан ĕмĕт кĕтĕр пурнăçа,
Киленсе çеç ан лар нихçан.
Пĕр киленӳшĕн пурăнсан,
Асту, çунаттуна усан.
Малтан мала! — эс ту тупа,
Çынна çĕкле юратупа!»

Савни-юратăва кусран
Эп тинкерсе, чунран пăхатăп.
Нихçан вăл каймĕ ман умран,
Ăна куç шăрçи пек упратăп.
Вăл манăн савăнăç, ман тунсăх,
Вăл манăн хурлăх та йăпанăç.
Эп пурнаймăп ĕнтĕ унсăр,
Пĕр унпа çеç чĕре лăпланĕ.

Вилсен çеç
Çак юратăва
Хăварăп çамрăк ăрăва.

## ÇУМĂР

Хĕвел паян ытла хĕртсе пăхать,
Пĕр çил те çуккă.
Сывлама та пăчă.
Шур хурăн та пуçне усса тăрать,
Çамка çине тар тухнă пăчăр-пăчăр.

Тавралăх çитнĕ ĕнтĕ тăвăнса,
Пĕр вăркăш уçă çил кăначчĕ халĕ.
Вара уй-хир, вăрман каш-кашласа
Пăчча кунтан таçта çити хăвалĕ.

Анчах нимскер те хускалмасть,
Шăпах,
Такам килсе куç пăвнăн туйăнать.
Шыв хĕрринче кăна чее шапа
Лĕпĕш тытма çăвар карса ларать.

Хĕвел юри пекех-çке пĕçертет.
Шапа та тӳсеймест,
Шыва чăмать.
... Пĕлĕтпеле çĕр пĕрлешен çĕрте

Сасартăках
Пуçлать кăвакарма.

Çывхарнăçем пырать вăл хуралсах,
Кун çутине ярать сарăхтарса.
Хĕвел енне хăюллăн талпăнать,
Ăна вăл хупламашкăн тăрăшать.

Пит парăнас килмест иккен хĕвелĕн,
Тухать вăл шăтарса, ураланса.
Анчах çиллес пĕлĕт ăна пит меллĕн
Хăйĕн айне чикет час çавăрса.

Таçтан сиксе тухать те çавра çилĕ
Çавăрттарать, йывăçсене авать.
Пўрт тăррине те хăвăрт сўсе илĕ,—
Унра халь, чăн та, иксĕлми хăват.

Тўпенелле вĕçет сарă тусан,
Пĕлĕтпелеваскать-тăр пĕрлешме.
Çут тумламсем пăт-пат! сасă туса
Çул тусанне пуçлаççĕ тĕрлеме.

Хура-кăвак тўпе çуркаланать,
Çитмĕл те çич пая вăл пайланать:
Куçа шартса,
Чуна шиклентерсе
Вут-çиçĕм ялтăрать-мĕн çиçкĕнсе.

Кĕр-рĕс! çеç аслати кĕрĕслетет,
Тăр-тăр чĕтреççĕ çурт кантăкĕсем.
Тўпе шăтать,
Çумăр ташша илет,

Çĕре ӳкет те çӳлелле сикет.
Чаш-чашлама пуçлаççĕ йывăçсем.

Ача-пăча чупать кăшкăрашса,
Йĕм пĕççине васкавлăн хăпартса.
Çерçи кĕтĕвĕ хурчкаран çапла
Çапă айне чăмать — хăтăлмалла!
Кусем те ак хӳтте çитсе тăраççĕ,
Пӳлĕннипе чĕнмеççĕ, тек пашкаççĕ.

Çумăр тăкать,
Тăкать витрелетсе.
Тӳпепеле çĕр хушшине пин хĕлĕх
Кам хунă-ши çаплах чипер тирсе?
Кĕç-вĕç янрассăн туйăнать.
Кам пĕлĕ,
Кам туйĕ унăн ырă кĕввине?..
Каллех таткаланать те хура пĕлĕт,
Шарлаттарать çеç çумăр юррине.

Душ айĕнчи пек, канлĕн киленсе,
Лараççĕ лăпкăн йăрăс хурăнсем.
Хăмăр тĕс çапнă, тĕннĕ çулçисем
Халь кайнă ĕнтĕ йăлт ешĕлленсе.

Тамалнăçем тамалчĕ вăйлă çумăр,
Хĕвел куç хӳрипе пăхма пуçларĕ.
«Çумăр иртет, пĕвелемешкĕн тухăр!» —
Ача-пăча сасси каллех янрарĕ.

Йĕпеннĕ çереме лачлаттарса
Вĕсем сикеççĕ тӳпене пăхса:
«Тухсам, хĕвел,

Тухсам, хӗвел!
Пылпа кулач халех паратпӑр.
Çутат, хӗвел.
Çутат, хӗвел!
Сана ак ташласа паратпӑр!»

Шӑпӑрлансем йӑлӑннине итленӗн
Хӗвел тухать чеен çеç хирӗнсе.
Сӗрен кӗперӗ симӗсӗн-кӗренӗн
Выртать куç умӗнчех пӗкӗленсе.

Пылпа кулач чӑнах çиесшӗн пулнӑн
Пӗлӗтсене хӗвел тӗртсе ярать.
Кашни тумлам çинче куллийӗ унӑн
Тавралӑха илем кӗртсе тӑрать.

Вӗлле умне хуллен тухать пыл хурчӗ:
Ун-кунӑн пӑхкалать тӗрӗслесе.
Часах,
Те пыллӑ чечеке вӑл курчӗ,
Çунатне сарчӗ,
Кайрӗ вӗл! вӗçсе.

Сипетлӗ çумӑр хыççӑн пурнӑç ырӑ!
Тӳсме май çук,
Утам-ха уялла.
Хум хыççӑн хум ярать хӑмӑш пек тырӑ...
Туссем,
Пылпа кулач
Çиме пулать!

---

## МАВЗОЛЕЙ УМĔНЧИ ХУРАЛ

Мавзолей умĕнче
Кунĕн-çĕрĕн
Кăйкăр куçлă маттур йĕкĕтсем
Пăшалпа,
Хускалмасăр,
Пит чĕррĕн,
Ăнсăртран шав ан пултăр тесе,
Пĕтĕм чун-чĕререн тимлесе
Хураллаççĕ çулпуç ыйхине.

Курма килнĕ çынсем те кунта
Пит тирпейлĕ тытаç хăйсене.
Хулленреххĕн пусса эс утан,
Ӳсĕрсе сас тума именен.

Мускава çитме май тупăнсассăн,
Çак сăваплă таса вырăна
Тепĕр хут чысласа пуç таясшăн
Эп çунатăп чунтан яланах.

Унсăрăн чĕреме çитмест темĕн,
Чи хакли,

Чи кирли çуккӑ пек.
Унта — çыннӑн чунри чӑн илемӗ,
Унта çын çӗкленет ӗмӗтпе.

Кӑнтӑрла-и, çӗрле-и — пӗрех,
Кӑйкӑр кусӑ маттур салтаксем
Хураллаççӗ çулпус ыйхине,
Хураллаççӗ çӗнелнӗ çӗре,
Хураллаççӗ куç евӗр вӗсем
Тӑван халӑхӑн çутӑ кунне.

---

## ЛЕНИН РОЛЬНЕ КОЛХОЗ КĔТŸÇĔ ВЫЛЯТЬ

Каç систермесĕр тĕксĕм çунатне
Тăван ял çийĕн ерипен сарать,
Урамсенчи
хыр юпасем çине
Пĕрер çут çăлтăр
вăл çакса ярать.

Чĕриклетме пуçлаççĕ хапхасем,
Шăнкăлт! тăваççĕ çеç шашулккасем.
Пушмакпала калуш тĕпĕсемпе
Юр калаçать хăй нăтăрт! сассипе.

Ик çын тĕл пулчĕç.
— Аванах çŸрет-и?..
— Клуба эппин?..
— Унта спектакль, тет-и?..
Уттарчĕç малалла шăкăлтатса,
Пирус тĕтĕм шăршийĕ хăварса.

Ял клубě.
Çуккă ěнтě пуш пукан.
Залра çутă сӳнет.
Зал шăпланать.
Мěнле уяв вара кунта паян?!
Колхоз кěтӳçě
Ленина вылять!..

Мěтри мучи тӳссе-мěн лараймасть,
Кӳршипеле пуçлать ак калаçма:
— Эп Смольнăйра вěт курнă Ильича.
Ильич хăй алă тытрě-çке, ача!
Тěлěннипе сăмах та хушаймарăм...
Ун чух, мěн калăн, çамрăк пулнă мар-и?..

Хěрлě чаршав мăнаçлăн уçăлать...
Нева хумне кěр çилě кустарать.
Пăшал сасси. Чупаççě салтаксем,
Çěлěк çине хăмач çакнăскерсем.

Шурă казак тармашкăн пикенет,
Ăна тăхлан часах хуса çитет.
Сценă çинче: «Ур-ра! Ур-ра»,— янрать,
Хěрлě ялав çилпе вăйă вылять...

... Ак Смольнăй.
Хăйěн ěç пӳлěмěнчен
Ильич тухать пěр шавсăр васкаса.
Ав, салтаксем, колонна çумěнче,
Çывраç винтовкине ыталаса.

Ильич вěсем çине пăхса тăрать.
Çулпуç куçне туйса,

Çав вăхăтра,
Пĕри каять сасартăк вăранса:

— Каçарăр... Ырнă...
Ленин йăл кулса
Ун хулпуççи çине
Хăй аллине
Хурать ачашшăн, куçранах пăхса.

Çак самантра,
Хăй ларнă вырăнтан,
Мĕтри мучи тăрать те васкаса,
Сценă çине каять кĕç хăпарса.
Алă парать вăл Ленина чунтан...
Унтан,
Хăех те илчĕ пулĕ тавçăрса,
Сăмах чĕнмесĕр каялла вăл анчĕ,
Пукан çине сас-чӳ тумасăр ларчĕ.
Куç сиктермесĕр пăхрĕ малалла...
Çамрăклăхне асилчĕ пулмалла...

Хуллен-хуллен çеç хупăнать чаршав.
Клуб ал çупать.
Залра тăвăллă шав.
Мучи тăрать,
Мучи куçне шăлать:
— Ха, мур ачи, мĕнле вăл пултарать!..
Çулпуç сăнарĕ, ун чĕрĕ сăнарĕ,
Мĕн чухлĕ ăрăва-ши çунат парĕ?!

Халăх шавлать. Хĕрсех вăл ал çупать.
Ăна халь урăх ним те кирлĕ мар.
Мĕншĕн тесен малтан-мала йыхрать
Этемлĕхе
Асран тухми сăнар.

---

## ÇУНАТЛĂ ĔМĔР ÇЫННИСЕМ

*(Юрă*

Çăлтăрсем патне вĕçетпĕр,
Уçă пирĕншĕн тӳпе.
Тĕнчене тĕлĕнтеретпĕр
Халĕ хамăр ĕçсемпе.

Чапа ĕçпе çĕкленĕ,
Пире вăй панă Ленин.
Чун савăнать, çиçеççĕ сăн-питсем.
Эпир çунатлă ĕмĕр çыннисем.

Улăп пек ман çĕрĕм-шывăм,
Çĕкленет кунран-кунах.
Эпир çирĕп, эпир сывă,
Çĕнтеретпĕр яланах.

Чапа ĕçпе çĕкленĕ,
Пире вăй панă Ленин.
Чун савăнать, çиçеççĕ сăн-питсем.
Эпир çунатлă ĕмĕр çыннисем.

Ылттӑн ӗмӗрте пурнатпӑр,
Тав, ӗҫри хастарсене.
Ҫутӑ хӗвелпе тӑрлатпӑр
Коммунизм ҫӗн ҫуртне.

Чапа ӗҫпе ҫӗкленӗ,
Пире вӑй панӑ Ленин
Чун савӑнать, ҫиҫеҫҫӗ сӑн-питсем.
Эпир ҫунатлӑ ӗмӗр ҫыннисем.

## ЯТ ХУНИ

Хавас юрлаҫҫӗ репродукторсем:
«Совет ҫынни ҫӗкленнӗ космоса!»
Апрель хӗвелӗ хытӑ тӗлӗнсе
Тӑрать, ав, ҫӳлӗ тӳперен пӑхса,
Тӑван ҫӗршывӑма саламласа:

«Пин-пин ҫулсем хушши эп ҫутататӑп,
Анчах та сирӗн пек маттурсене
Пӗрремӗш хут эп, пуҫласа куратӑп,
Кӳр, чӑмӑртам ӗҫчен аллӑрсене!»

Ҫуралнӑ ҫӗнӗ ҫын ҫак самантра,
Пӗрремӗш хут сас панӑ тӗнчере.
Ҫав сас янранӑ кӑшкӑрнӑн «УРА!» —
Пурте илемлӗн куранӑ пӳртре.

Ун амӑшӗ йӑл кулнӑ савӑнса,
Каланӑ хӑй тӗпренчӗкне пӑхса:
— Вӑл тивӗҫ пултӑр космос ӗмӗрне,
Ҫампа пӗрремӗш космонавт ятне —

Гагаринăн ятне — ăна хуратăп.
Ачам тĕреклĕ ӳсессе шанатăп...

Апрель юрланă, савăннă тĕнче,
Вăл пуçне тайнă паттăр умĕнче.

*16.IV.1961 ç.*

## СĂПКА

*Çĕр — этем ăс-тăнĕн сăпки,*
*анчах та ĕмĕр сăпкара пу-*
*рăнма юрамасть.*
*К. Э. Циолковский.*

Таса та типĕ кипкепе
Пиелесессĕн,
Лĕпĕш пек
Çăп-çăмăл çеç чăмăрккана
Хураççĕ лăпкă сăпкана.

Çӳхе çеç чĕнтĕрпе витсе
Шăнасенчен ăна сыхлаççĕ.
Вăл канлĕ çывăртăр тесе
Çурма саспа хуллен юрлаççĕ.

Вăл тутлăн-тутлăн мăшлатать,
Тĕлĕкĕнче йăл-йăл кулать.
Сăпки хупран çеç. Пултăрах!
Ачи халь çывăртăр вăрах.

Анчах та вăхăт иртнĕçем
Сăпка пуçлать хĕсĕкленме.

Ачан ура тупанĕсем
Пуҫлаҫҫĕ ĕнтĕ кеҫĕтме.

Урайнелле вăл ăнтăлать:
Шуҫать, шуҫать хырăмпала.
Упаленме кĕҫ тытăнать.
Унтан вара
Хăра-хăрах
Ура ҫине майпен тăрать.
Сак хĕрринчен ҫирĕп тытса
Каясшăн малалла утса.

Ҫапла, пĕрремĕш пусăма
Ача пуссассăн та хĕнпе,
Вăл тытăнать-мĕн уйрăлма
Хĕсĕкленен хуп сăпкипе.

Тухма пуҫлать картишнелле,
Унăн йăлтах-ҫке пĕлмелле.
Вăл хăвалать чăх-чĕпсене,
Хура та сăхтарать хăйне.
Ыратнипе вăл макăрать,
Ҫавах куҫҫулĕ час типет...

Кăштах ӳссессĕн, урамра
Ĕрĕхтерсе чупса ҫӳрет.
Шкула каять вăл. Ĕҫ патне
Алли пырать ун кулленех.

Тăван уй-хир, лаштра вăрман
Ак тĕлĕнме пуҫлать унран:
Илем кĕртет вăл ҫĕр питне,
Пĕрмай туптать ăсне-пуҫне.

Ҫак тулӑх Ҫӗр сӑпки халь ун!
Анчах та лӑпкӑ мар-ҫке чун.
Ҫук канӑҫ унӑн чӗрине,
Пӗлес килет пӗлменнине.
Курманнине — ун курмалла,
Туманнине — ун тумалла.

Сӑпкамӑр — Ҫӗр те этеме,
Кур, тытӑнать хӗсӗкленме.
Ӑс-тӑн вӗрет, ӑс-тӑн хӗрет,
Ӗмӗте ҫӗн инҫет чӗнет.

Тапса сикет ҫын ҫӗр ҫинчен —
Вӗҫет тӗнче уҫлӑхӗнче!
Ҫапла ҫӗнни ҫине ҫӗнни
Шырать хастар совет ҫынни.

## КĂВАКАРЧĂНСЕМ

Кашни ирех,
Ĕçе кайнă чухне,
Çитсессĕн Ленин палăкĕ тĕлне,
Пĕр мучие ялан эп асăрхатăп,
Вара кăшт чарăнсах пăхса тăратăп.
Пĕр пĕчĕкрех хутаç ун аллинче,
Тем чухлĕ кăвакарчăн хăй тавра:
Пуç тăрринче те
Хулпуççи çинче
Пĕр шикленмесĕр кăмăллăн лараç.
Илет çав хутаçран ывăçласа
Сап-сар тулла,
Вара асфальт çине
Парать вăл кăлтăртисене сапса,—
Лешсем сăхаççĕ çеç
Пĕрчĕсене,
Чупса кăна çÿреç
Енчен-енне.

Тăраннă хыççăн
Кăвакарчăнсем

Каяççĕ тĕрлĕ çĕрелле вĕççе.
Анчах мучи сасне парать кăна,
Кĕçех пĕр ушкăн ун умне анать.
Туссем çур сăмахран сиссе илеççĕ,
Пĕрне-пĕри ытла аван пĕлеççĕ.

Анчах пĕрре çинче,
Çав сехетре,
Курмарăм мучие эп площадьре.
Тек чупкалаççĕ кăвакарчăнсем,
Пăхаççĕ тилмĕрсе, апăршасем.
Ларсан-ларсан, каяççĕ çĕкленсе,
Çӳреççĕ тӳпере кăштах вĕççе.
Пĕр пиллĕк-улттă çаврăнсан,
Каллех
Анса лараççĕ хăнăхнă тĕлех.
Вĕсем кĕтеççĕ тусĕ тухасса:
«Ма халиччен тухмасть пуçтарăнса?»

— Мучи, темскер, чирленĕ пулмалла,
Ахаллĕн тахçанах вăл тухмалла,—
Тесе калаçрĕç паллакан çынсем...
Пуç тăрринче, ав, кăвакарчăнсем
Вĕçеççĕ, кĕтнĕ май, ушкăнпала.

Ĕçрен таврăннă чух,
Çав вырăнта,
Эп куртăм тĕлĕнтермĕш, тупата.
Асфальт çине пĕр ушкăн кăвакарчăн
Хальчченхи евĕр лăпкăн анса ларчĕ.
Пĕр виç çулхи ача çав ушкăна
Хăй пĕчĕк-пĕчĕк ывăçĕпеле

Сĕлĕ сапса памашкăн тытăнать.
(Ку, чăннипех, туссем, тĕлĕнмелле!
Эп чараймарăм хамăн куççуле).

Тăрать кăлтăртисен хушшийĕнче
Тин çеçке çурнă, сарăлнă чечек.
Вăл хăй те кăвакарчăн пек таса,
Çӳрет вĕсемпеле вăй выляса.
Ак кукленсе ларать вăл ерипен,
Кайăк енне тăсать хăй ывăçне.
Кăлтăртисем ун ывăçĕ çинчен
Сăхаççĕ тутă, сар пĕрчĕсене...

Ак амăшĕ пырать ачи патне,
Хаваслăн кукленет вăл ун умне.
Çавах та шикленмерĕç кайăксем,
Çӳрерĕç ним пулман пекех вĕсем.

— Ачам, пăхсам,—тет амăшĕ хуллен,—
Пĕсехисем мĕнтер кăвак вĕсен!
Таса кăвак тӳпен пĕчĕк пайне,
Йăр ярăнса вĕçсе пынă чухне,
Илсе çыпăçтарман-ши хăй çумне?
Эс кур-ха, кур тата куçĕсене!
Ирхи хĕвел шевли пек хĕрлĕ, тăрă.
Çакна асра тытмашкăн эсĕ тăрăш:
Тĕксен сăнне вăл илнĕ тӳперен,
Куçсен тĕсне вăл илнĕ хĕвелрен.
Çавăнпалах
Вăл туслă çынпала,—
Ахальтен мар выляççĕ санпала.—
Чăп! чуп тăвать вăл хăйĕн ачине,
Вĕл-вĕлтĕркке сап-сар çӳçлĕскерне.

Амăшĕпе ачин епле телей!
Вĕсем çине хĕвел савса пăхать.
Тӳпе таса, кăвак тĕсĕпеле
Пире хăрушлăх мар,
Кун-çул сунать.

Эй, çӳрĕр,
Вĕçĕр,
Кăвакарчăнсем —
Хĕвеллĕ,
Тăнăç пурнăç паллисем!

---

# ТУПМАЛЛИ

Клуб умĕнче . . . . . . 3
«И, улми, сад улми...» . . . 4
«Мĕн ачаран иленнĕ улăха...» . 5
Шăпчăксем . . . . . . . 7
«Хĕвел, ĕшеннĕскер, анса ларать...» . . . . . . . 9
Тĕрленчĕксем . . . . . . 11
Колхоз председателĕ хирте . . 13
Тракторист баян туянать . . 16
Водопровод . . . . . . 20
Пĕрремĕш квитанци . . . 22
Хирти концерт . . . . . . 24
Асамат кĕперĕ . . . . . . 27
«Паян мĕн-ма çавтер хаваслă...» 29
Пĕрремĕш велосипед . . . . 31
Çăкăр . . . . . . . . 34
«Хăш чух сăнасарах пăхсан...» . 37
Наçтук инкепе Хветюк тете çинчен . . . . . . . . 39
Мулкачпа Çилхăван . . . . . 47
Анне . . . . . . . . . 48
Ывăлĕ . . . . . . . . 51
Халăх кĕвви . . . . . . . 57

«Ирсеренех пуҫларӗ тӑм ӳкме...» . . . 58
Атӑ . . . . . . . . . 59
Ҫӗнӗ ҫул курки . . . . . 62
«Хӗл ларчӗ...» . . . . . . . 66
Юратупа тӗл пулни . . . . . 69
Ҫумӑр . . . . . . . . . 74
Мавзолей умӗнчи хурал . . . 78
Ленин рольне колхоз кӗтӳҫӗ вылять . . . . . . . 80
Ҫунатлӑ ӗмӗр ҫыннисем (юрӑ) . 84
Ят хуни . . . . . . . . . 86
Сӑпка . . . . . . . . . 88
Кӑвакарчӑнсем . . . . . . 91

Цена 14 коп.

